Василий Давыдов-Анатри

# Юратнă çĕршывăм

Çĕрĕм-шывăм, Тăван çĕрĕм-шывăм,
Чĕререн юрататпăр сана.
Ĕмĕр-ĕмĕр пул эс паттăр, сывă,–
Мĕнле лайăх хальхи самана!

Çĕрĕм-шывăм, кал-кал эс утатăн,
Çул тытатăн малтан малалла.
Çурхи çут хĕвел пек ялкăшатăн,–
Мĕнпур халăх пĕрле санпала.

Çĕрĕм-шывăм, мĕн-мĕн эс курмарăн:
Вутра çунтăн тăшман тапăнсан...
Çирĕп тăтăн, юта парăнмарăн
Ильич уçнă çулпа утнăран.

Йăлтăр-йăлтăр çиçет ирхи сывлăм
Тӳпере мир хĕвелĕ пуртан.
Çĕрĕм-шывăм, Тăван çĕрĕм-шывăм,
Çулсерен эс çĕклен, вăйлăлан!

*Давыдов-Анатри, В. Юратнă çĕршывăм : сăвă / В. Давыдов-Анатри // Тăван Атăл. – 1982. – №12. – С. 8.*